Чăвашсен пĕрремĕш хаçачĕ «Хыпар» тухма пуçланăранпа 115 çул çитрĕ

«Хыпар» хаçат никĕслевçи Николай Васильевич Никольский мăшăрăпе Александра Владимировнăпа. 1907–1910 çç.

Первый номер газеты «Хыпар»

Редакція адресӗ: Казань. Учительская Семинарія.

ͻ1906 ҫул. ϲ

ХЫПАР

ЕРНЕРЕ ПӖРРЕ ТУХАКАН ХАҪЕТ.

Редакція конторӗ: Казань, «Центральная типографія», Воскресенская ул., рядомъ съ циркомъ.

Хаҫет хакӗ: ҫулталӑка 3 тенкӗ, 6 уйӑха 1 т. 75 пус.

1906 г. Январ. 8. Вырӑсерни кун. № 1

Хаҫет усси.

Ҹӑвашсем нумайӗшӗ: «пире ҹӑвашла хаҫет кирлӗ, мӗншӗн тесен епир вырӑсла пӗлместпӗр, вырӑслине вуласан та ӑнланаймастпӑр», теҫҫӗ. Тата: «тӗнҹере мӗн-мӗн пулнине ҹӑвашла хаҫет тӑрӑх пӗлес-ҹӗ», тийсекен те пур. Ҫапла ентӗ ҹӑвашсем хӑйсемех ҹӑвашла хаҫетпӑн ҫунаҫҫӗ. Ҹӑнах та хаҫетсӑр пурӑнма йывӑртарах; Ырӑ курса пурӑнас тийсекен халӑхсен пурин те пӗр хаҫет мар, вуннӑ, ҫитмӗл, ҫӗр хаҫет та тухат̆. Араб йатлӑ халӑх хӑй йышлах мар пулин те, хӑйӗн ҹӗлхипе темиҫе хаҫет кӑларат̆. Хаҫет тӑрӑх арабсем нумай пӗлеҫҫӗ, нумай пӗлнӗрен пурӑнӑҫа та пирӗн пек тимӗ ҫӑкӑр ҫисе ирттермеҫҫӗ, пирӗн пек хура пӳртре пурӑнмаҫҫӗ. Чехсем хаҫет сук ҹухне пит наҹар пурӑннӑ, хаҫет тухнӑранпа вӗсен пиколасем нумайланнӑ, пурӑнӑҫӗ аванланнӑ. Пирӗн те, ҹӑвашсен, ха от тӑрӑх ырра вӗренес-ҹӗ, хамӑр наҹар пурӑнӑҫа аванлатас-ҹӗ!

Николай Иванович Ильминскій.

Авалхи ҫынсем калаҫҫӗ: ӗҫе пуҫланӑ ҹухне лайӑх тытӑнсан-сур ӗҫ тунӑпа пӗрех, теҫҫӗ. Ҫак ваттисем каланӑ сӑмахсем тӑрӑх кирек йепле усӑллӑ, ырӑ ӗҫ-пӗн те, вӑл ӗҫ лайӑх ӑнса пырат̆ пулсан, ӑна пуҫланӑ ҫынна мухтама тивҫлӗ. Вӑл ҹӑнах та ҫапла, ӗҫе лайӑх пӗлсе пуҫласан анҹах ӗҫ ӑнса пырасса кӗтме пулат̆; сургсем ларттас тӗлӗнпрен те, суту-илӳ тӑвас тӗлӗнпрен те, тата пурнҹен ытла халӑха вӗрентсе сутта кӑларнӑ ҫӗртӗ те ҫавӑн пекех. Ҹӑвашсене вӗрентме ҹи малтан Николай Иванович Ильминскій пуҫланӑ, ҫак пысӑк ӗҫе лайӑх пуҫлаӗа йанине халӗ вӑл ӗҫ хӑйне хӑйех пулса пынӑ пек туйӑнат̆. Халӗ епир ҹӑвашла хаҫет тухнине куратпӑр, ҫирӗм ҫул малтан ун ҫинҹен шухӑшламалли те пулман. Ҫавӑнпа Николай Ивановича асӑнса, ӑна тав-тусо ырӑ сӑмахсем каламасӑр хӑвармӑпӑр, мӗншӗн тесен тӗрӗссипе каласан, Николай Иванович ҹӑвашсене вӗрентме пуҫламан пулсан, ҹӑвашла хаҫет кӑларасси асӑнмалли те ҫук-ҹӗ.

Йепле ӗҫ тунӑ вара Николай Иванович ҹӑвашсемшӗн?

Вӑл ҹӑвашсене хӑй ҫулпа пымаллине кӑтартнӑ, малтанхи ҹӑвашсемшӗн тӑрӑшакансене ҹӑвашсене вӗрентсе сутта кӑларма вӗрентнӗ.

Николай Иванович ҹӑвашсемшӗн ҹи малтан тӑрӑшма пуҫланӑ ҫынсене: ҫын телейӗ нумай вӗренсе ӑслӑланнине йӗркеллӗ пурӑнма пӗлнинҹен килет, тесе вӗрентнӗ. Николай Иванович ҫынна йуратса ӑна пулӑшма тӑрӑшакан ҫынсене анҹах йуратнӑ. Николай Иванович вырӑссенҹен пуҫне тата ҹӑвашсене, тутарсене, ҫармӑссене йуратса вӗсене ҫырӑва вӗрентесшӗн пулнӑ, мӗншӗн тесен вӑл халӑхсем ӗҫҹен, вӗренме йуратакансерсем, хӑйсен наҹар пурӑнӑҫне ӗҫлесе тӳрлетесшӗнсерсем пулнӑ. Ҫав халӑхсене вӗрентме вӑл вӗсен ҹӗлхипе кӗнекесем ҫантарнӑ, хӑйсен хушшинҹенех священниксем, вӗрентекенсем кӑларнӑ. Ҫавӑнпа халӗ ҫырӑва пӗлекен ҹӑвашсем хӑйсем Н. Н. курман пулсан та, хӑйсем ҫырӑва пӗлнишӗн ӑна тав-тумалла. Пиллӗкӗмӗш заповѣдь ҫинҹе: аҫуна-аннӳне хисепле, ҫӗр ҫинҹе сана ырӑ пулӗ, тет. Н. И. ҹӑвашсене вӗрентекенсенӗн ашшӗ, ҫавӑнпа ҹӑвашсен ӑна хисеплес пулат̆. Ҫак заповѣдьпе пурӑнсан анҹах вӗсен ӗҫӗ ӑнса пырӗ, мӗншӗн тесен вӗсен ӗҫӗ малтан лайӑх пуҫланнӑ.

Н. Н. *пур* ҫамрак аҹасене те шкула вӗрентме кӳртсе вӗсене Турӑран хӑраса ашшӗ-амӑшне хисеплесе пурӑнма вӗрентесшӗн пулнӑ. Анҹах Н. Н. ҫапла *пур* аҹасене те вӗрентес тесе шухӑшлани халӗ те ҫитмен, *пур* аҹасене те вӗрентес тесен йепле те пулсан школасем нумайтарах лартма тӑрӑшас пулат̆. Н. Н. патшапан ҹан ҹури пулнӑ, вӑл вырӑс патшалӑхӗ телейлӗхӗшӗн, лайӑхлӑхӗшӗн пит тӑрӑшнӑ. Ҫак тӗлӗшрен те ҹӑвашсен Н. Н. пек пулма тӑрӑшас пулат̆. Самана лайӑх пултӑр тесен йӗркеллӗ пурӑнма тӑрӑшмалла, хушӑн анҹах мар, патшалӑх усишӗн тӑрӑшас пулат̆. Патшалӑх пикекӗ пӗтем халӑх пикекӗ. Халӗ нумайӗшӗ хӑйсен пурӑнӑҫне ытти ҫынсен пурлӑхне туртса илсе тӳрлетесшӗн, ҫавӑн пирки нумай усал ӗҫ пулат̆. Н. Н. каланӑ пек тӑвас тесен, наҹар пурӑнӑҫа пуринҹен малтан хӑна-ху лайӑх йусраса, вӗренсе, ӗҫлесе тӳрлетме тӑрӑшас пулат̆.

Ҫӗр ӗҫлекенсем министр патӗнҹе.

Аслӑ-министр Витте, хресҹенсен ушкӑнӗ патшаран мӗнмӗн ыйтма шухӑшланине пӗлсен, сав ушкӑнран уйлапӑ ҫынсене хӑй патне каласма пыма ҹӗннӗ. Вара декабрӗн 4-мӗш

Хаҫатӑн пӗрремӗш номерӗ.

Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров
«Хыпар» хаҫат редакцийĕнче. 1995, раштав.

Хусан, Чернышевский урамĕ, 5-мĕш ҫурт. Асăну хăми ҫакнă самант.
(Хаҫатăн пĕрремĕш номерне Н.В.Никольскин ҫак ҫуртри хваттерĕнче
пичете хатĕрленĕ.) 1996, кăрлач, 21.

Муркаш районĕнчи Купăрля ялĕнчи Н.В. Никольский паркĕнче. 1996, нарăс.

Чăваш культура пĕрлĕхĕн хастарĕ Н.С. Дедушкин тата А.П. Леонтьев Хусанти Ар масарĕнче. 2003, ака.

Атăлçи халăхĕсен
тĕпчевçи, чăвашсен
„Хыпар" хаçачĕн
/1906/
никĕслевçи
Исследователь
народов Поволжья,
основатель
чувашской газеты
„Хыпар"
/1906/
Профессор
НИКОЛЬСКИЙ
Николай Васильевич
19.V.1878 - 2.XI.1961

Çĕнĕ палăк.

ЧР Президенчĕн Администрацийĕн ертӳҫи П.С. Краснов, «Хыпар» хаҫатăн тĕп редакторĕ А.П. Леонтьев, Чăваш наци конгресĕн президенчĕ Г.Н. Архипов.

«Хыпарти» черетлĕ «ҫавра сĕтел».

«Хыпар» хăни – А.Г. Николаев космонавт (варринче).

«Хыпар» хăни – Г.Н. Волков академик (сулахайри).

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн директорĕ В.С. Григорьев тата «Хыпар» хаçат редакторĕ А.П. Леонтьев. Муркаш районĕнчи Купăрля ялĕ. 2006, кăрлач.

«Хыпар» – 100 çулта. Г.Н. Волков академик, «Хыпар» Издательство çурчĕн генеральнăй директорĕ-тĕп редакторĕ А.П. Леонтьев, ЧР культура, национальнăçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министрĕ П.С. Краснов, ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров, ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ М.А.Михайловский, ЧР Президенчĕн Администрацийĕн ертӳçи Э.А. Аблякимов.

«Хыпар» çемйи. 2000-мĕш çç.

«Хыпар» Издательство çурчĕн коллективĕ. 2006, кăрлач, 21

Сăн ӳкерчĕксем – А.П. Леонтьев архивĕнчен